Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

*87 (7941) №* ✻ *Юн кун, 2011 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйӑхӗн 2-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*

## Пӗрремӗшсем

***Суворов яч. хис. хуҫалӑхӑн ӗнесене машинӑпа сӑвакан операторӗ Валентина Валерьевна Макарова (сӑн ӳкерчӗкре сулахайри) кӑҫалхи 9 уйӑхра хайӗн ушкӑнӗнчи кашни ӗнерен вӑтамран 6005 кг сӗт сунӑ. Хастар доярка ӗне сӑвакансен районти экономика ӑмӑртӑвӗнче ҫирӗппӗнех 1-мӗш вырӑнта пырать. В. Макаровӑпа пӗрле эсир техник-осеменаторсем хушшинче районта ҫеҫ мар, республикӑра та ырӑпа палӑрма ӗлкӗрнӗ специалиста Валентина Алексеевна Димитриевӑна куратӑр. 15 ҫул «Ударник» хуҫалӑхра ветфельдшер пулса вӑй хунӑ хӗрарӑм паян хуҫалӑхри Вӑрманкассинчи сӗт ферминчи техник-осеменатор. Ҫамрӑк специалист кӑҫал техник-осеменаторсен районти конкурсӗнче мала тухса республикӑри ӑмӑртӑва хутшӑнма тивӗҫ пулчӗ. Хӗрӳ кӗрешӳре Валентина Алексеевна республикӑри ҫамрӑк техник-осеменаторсем хушшинче те 1-мӗш вырӑн ҫӗнсе илсе Муркашсен ятне ҫӳле ҫӗклерӗ.***

*А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.*

**Ноябрӗн 4-мӗшӗ – Тыр-пул кунӗ**



**ХИСЕПЛӖ ЯЛ ӖҪЧЕНӖСЕМ!**

Ҫитес эрне кун эпир йӑлана кӗнӗ тӑрӑх Тыр-пул уявне ирттеретпӗр. Сире пурне те ҫак кун ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Ял хуҫалӑх ӗҫченӗн ӗҫӗ нихӑҫан та ҫӑмӑл пулман. Кӑҫал та ял хуҫалӑх культурисене йӗркеллӗ ҫитӗнтерсе пухса илтӗр, выльӑх апатне нихҫанхинчен те нумайрах хатӗрлесе хӑвартӑр, ҫитес ҫул валли те тыр-пул никӗсне хывса хӑвартӑр.

Ферма ӗҫченӗсем аш, сӗт ытларах туса илессишӗн тимлеҫҫӗ. Выльӑхсен йышне ӳстерессипе те ӗҫлеҫҫӗ. Общеcтвӑлла выльӑх-чӗрлӗхе ӑнӑҫлӑ хӗл каҫарас, выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстерес тесе тӑрӑшаҫҫӗ.

Ҫакӑ йӑлтах эсир пӗр паянхи кунпа ҫеҫ пурӑнманнине, ял хуҫалӑх ӗҫченӗ пурнӑҫ никӗсне хываканӗ пулнине ҫирӗплетсе парать. Сӗтел ҫинчи кашни татӑк ҫӑкӑр, сӗт-турӑхӑн кашни тумламӗ сирӗн пархатарлӑ ӗҫӗрпе ҫыхӑннӑ. Тайма пуҫ сире ҫакӑншӑн.

Ял ӗҫченӗ нихӑҫан та нимӗнле йывӑрлӑхран та хӑраман. Кӑҫал та ҫанталӑк условийӗсемпе туллин усӑ курма тӑрӑшрӑр. Тыр-пул кашни гектартан 25 центнер, ҫӗр улми 121 центнер пухса кӗртме пултартӑр. Ку вӑл иртнӗ ҫулхинчен палӑрмаллах пысӑк кӑтарту.

Тыр-пул уявӗ умӗн манӑн ҫавӑн пекех килти хушма хуҫалӑх тытакансене те, хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсене те уйрӑммӑн тав тӑвас килет, мӗншӗн тесен район аталанӑвӗнче вӗсен тӳпи те ҫителӗклех.

Ҫавӑн пекех тав сӑмахне шкул ачисен, бюджет организацийӗсенче, район администрацийӗнче ӗҫлекенсен ячӗпе те калас килет. Хуҫалӑхсене ҫӗр улми пуҫтарса парас ӗҫре вӗсем те ҫӗр ӗҫченӗсемпе танах тӑрӑшрӗҫ, вӗсене йывӑрлӑхра пулӑшрӗҫ.

Хаклӑ ентешӗмӗрсем! Сире пурне те ҫӑмӑл мар, анчах пархатарлӑ ӗҫӗршӗн чӗререн тав тӑватӑп. Районӑн социаллӑ пурнӑҫӗпе экономика аталанӑвӗнче сирӗн ӗҫӗр ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Малашне те йывӑрлӑхсене парӑнмасӑр умри тӗллевсене чыслӑн пурнӑҫласса шанатӑп. Сывлӑхӑр ҫирӗп, кун-ҫулӑр вӑрӑм пултӑр. Телей яланах ҫумӑрта ҫӳретӗр.

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

## Кӑтартусем ыранхи кунпа пурӑнтараҫҫӗ

**Интервью**

***Ӗҫне пӗлекен хресчен кӑҫалхи ҫанталӑк условийӗсенче пит хӗретмелле мар тухӑҫ туса илчӗ, унӑн ытларах пайне вӑхӑтра пуҫтарса кӗртсе кӗлетсене упрама хучӗ. Малта пыракан ҫӗнӗ технологисемпе анлӑн усӑ курса тӗш тырӑпа пӑрса йышши культурӑсене, ҫӗр улмипе пахча ҫимӗҫе, тымар ҫимӗҫе тухӑҫлӑ туса илнӗ хресчен Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталлӑкӗнче ирттерекен Тыр-пул уявне те хатӗр. Вӑл Муркашра чӳк уйӑхӗн 4-мӗшӗнче иртмелле. Уява хатӗрленнӗ самантра район хаҫачӗн экономика пайӗн редакторӗ А. БЕЛОВ район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗпе, ял хуҫалӑх пайӗн ертӳҫипе В.А. КАЛИНИНПА тӗл пулса калаҫнӑ.***

**– Владимир Аркадьевич, районти агропромышленность комплексӗнче хастар та маттур, ҫӗр ӗҫне чунтан парӑннӑ пиншер ҫын вӑй хуни Муркаш ене тивӗҫлӗ шайра аталанса пыма пулӑшать. Ҫавӑнпа та уяв умӗн ҫӗр ӗҫченӗн кӑҫалхи утӑмӗсем пирки эсир мӗн шутланине пӗлес килет.**

– Калаҫӑва чӗннӗшӗн тавах. Пӗтӗмӗшле илсен районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче уй-хир ӗҫӗсем вӗҫленчӗҫ. Паянхи «Свобода», «Ударник», «ВаСем» хуҫалӑхсенче юлашки гектарсем ҫинче ҫӗр улми кӑларасси тата кукӑста касасси вӗҫленмелле. Чӑнлӑхран иртме ҫук, кунта юлашки икӗ уйӑхра тӑтӑш тӑнӑ ҫумӑрсем уйхир ӗҫӗсене тӑсса ячӗҫ. Апла пулин те районти ҫӗр ӗҫченӗ куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек упраса ӳстернӗ тырӑ-пулӑна, ҫӗр улмине, пахча ҫимӗҫе хирте хӑвармарех. Тухӑҫӗ те пит хӗретмелле мар. Вӗсене тишкерни паян пире умри чикӗсене те палӑртма пулӑшать, Муркашсем вӗсене те ҫӗнессине шантарать.

Ҫитес эрне кун Муркашсем ял хуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсен тата продукци тирпейлекен промышленноҫра вӑй хуракансен професси уявӗ ячӗпе район центрӗнче Тыр-пул уявне пухӑнаҫҫӗ. Пирӗн районшӑн вӑл пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑран пурне те хастар ӗҫӗрсемшӗн уяв ячӗпе саламлатӑп, малашне те тухӑҫлӑ ӗҫлеме ӑнӑҫу сунатӑп.

Агропромышленность комплексӗнче хастар та маттур, ҫӗр ӗҫне чунтан парӑннӑ пиншер ҫын вӑй хуни района тивӗҫлӗ шайра аталанса пыма пулӑшать.

**(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).**

**Ноябрӗн 4-мӗшӗ – Раҫҫейри Халӑх пӗрлӗхӗн кунӗ**

## Ҫӗр-шыв малашлӑхӗ – халӑх пӗрлӗхӗнче

Ноябрӗн 4-мӗшӗнче Раҫҫей Халӑх пӗрлӗхӗн кунне уявлать



**1612 ҫулта Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский ертсе пынипе халӑх Мускава Польша интервенчӗсенчен хӑтарнӑ. Ҫапла вара Аслӑ пӑтранчӑк тапхӑрӗ вӗҫленнӗ.**

**Вырӑс Православи чиркӗвӗ 400 ҫула яхӑн ҫак куна Казански Турӑ Амӑшӗн турӑшӗн кунӗ тесе уявлать. Ҫак турӑш халӑха Мускава ирӗке кӑларма пулӑшнӑ тесе шутлаҫҫӗ. 1917 ҫулччен ҫак куна Алексей Михайлович патша указӗпе чиркӳ уявӗ ҫеҫ мар, патшалӑх уявӗ тесе паллӑ тунӑ.** **(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)**

**Блиц-интервью**

## Ӗҫлес текен майсем шырать

***Район экономикипе социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн утӑмӗсем РФ тата ЧР Президенчӗсем, Раҫҫей Федерацийӗн тата Чӑваш Ен Правительствисем ҫӗр ӗҫчене вӑхӑтлӑ пулӑшнине, район администрацийӗ депутатсен корпусӗпе тата предприяти-организацисен ертӳҫисемпе, общественлла йӗркелӳсемпе килӗшӳллӗ ӗҫленипе ҫеҫ курӑмлӑ. Нумай ыйтӑва паян ял хуҫалӑх предприятийӗсем хайсен вӑйӗпе татса параҫҫӗ. Ҫавӑнпа та Тыр-пул уявӗ умӗн хӑш-пӗр ертӳҫӗсене кӗске калаҫӑва чӗнтӗмӗр.***

**В. АНАНЬЕВ («Свобода» хуҫалӑх):** Ӗҫе юратса килес те киле кӑмӑллӑ каяс. Ҫак тӗллевпе ӗҫе тухаҫҫӗ пирӗн ӗҫченсем. Уй-хирте те, общественлла выльӑх-чӗрлӗх фермисенче те тирпейлӗхе малти вырӑна хуратпӑр. Ӑратлӑ выльӑх ӗрчетекен «Свобода» хуҫалӑх-заводри ҫӗр ӗҫченӗсем хӑйсен ӗҫӗпе тӑрӑшулӑхӗ ҫине кӑна шанса ӗҫлесси – ӑруран ӑрӑва пыракан ырӑ йӑла. Вуншар ҫул пырать вӑл, ҫӗршыври политикӑпа экономикӑн нихӑш хумӗ айне те пулман.

**В. СЕМЕНОВ (Е. Андреев яч. хис):** Ял хуҫалӑх предприятийӗсем тӑтӑш ҫӗнӗ техника туянма вӑй-хал ҫитерейменнине шута илсе кӑҫал эпир хамӑр кооперативра техникӑна хӗллехи управа тӗплӗн лартасси ҫине тимлӗрех пӑхрӑмӑр. Пирӗн ӗҫе районти комисси те лайӑх хак пани эпир тӗрӗс ҫул суйланине ҫирӗплетет.

**В. КОНДРАТЬЕВ («ВаСем» ООО):** Ҫӗнӗ техникӑсӑр майӗ ҫук. Ҫакна ӑнланса кӑҫал кӑна эпир МТЗ-1221 икӗ трактор, МТЗ-82, ҫӗр улми кӑлармалли икӗ комбайн, пахча ҫимӗҫе тумламӑн шӑвармалли оборудовани, тырӑ вырмалли «Полесье» комбайн туянтӑмӑр. Ҫӗнӗ техника илме 20 миллион тенкӗне яхӑн тӑкаклантӑмӑр. Паян вӗсене тирпейлӗ управа лартрӑмӑр.

**А. БЕЛОВ**
**калаҫнӑ.**

**Суйлав**

## Партисен бюллетеньри номерӗсем паллӑ

Октябрӗн 27-мӗшӗнче Чӑваш Енри Тӗп суйлав комиссийӗнче республика Патшалӑх Канашне суйламалли бюллетеньри вырӑна палӑртассипе регистрациленӗ партисем шӑпа туртнӑ. Унта партисен регион уйрӑмӗсен представителӗсем хутшӑннӑ.

Пӗрремӗш номере Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗ, «Единая Россия» партин Чӑваш регион уйрӑмӗн политканашӗн секретарӗ Михаил Михайловский туртса кӑларнӑ. Иккӗмӗш йӗркере – КПРФ.

Шӑпа туртнин итогӗсемпе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш созыври Патшалӑх Канашӗн 2011 ҫулхи декабрӗн 4-мӗшӗнчи суйлавӗнчи суйлав бюллетенӗ ҫак йӗркепе пулӗ:

1. «Единая Россия» политика партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗ.
2. «Патриоты России» политика партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗ.
3. «Справедливая Россия» политика партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗ.
4. Раҫҫей либераллӑ демократсен партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗ.
5. Раҫҫей Коммунистсен партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗ.

**Саламлатпӑр**



Хаклӑран та хаклӑ юратнӑ аннене, ҫепӗҫ чунлӑ кукамая, тӑвана – Юнкӑ ялӗнче пурӑнакан, чӳк уйӑхӗн 2-мӗшӗнче 60 ҫулхи юбилейне паллӑ тӑвакан **Анна Гурьевна ИШТУДОВӐНА** чун-чӗререн чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Эсӗ пурри пирӗншӗн питӗ пысӑк телей. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, чун ӑшшине пире парнеленӗшӗн. Эпир сана юрататпӑр, эсӗ пурришӗн савӑнатпӑр. Сывлӑху сан ҫирӗп пултӑр, кун-ҫулу вӑрӑм та телейлӗ килтӗр. Ачусемпе, мӑнукусемпе тата мӗн пур тӑванпа пӗрле савӑнса пурӑнмалла пултӑр. Пире ырӑ сунса яланах пулӑшса тӑнӑшӑн тав тӑватпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе хӗрӗ мӑшӑрӗсемпе, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем, пускилсем.**



Хаклӑран та хаклӑ юратнӑ аннене, кукамая – Вӑрманкас ялӗнче пурӑнакан **Антонина Николаевна ИЛЛАРИОНОВӐНА** 70 ҫулхи юбилей ячӗпе саламлатпӑр. Яланах сывлӑхлӑ, хавас кӑмӑл-туйӑмлӑ пулмалла пултӑр, кӗрекӳ ҫӑкӑр-тӑвартан ан татӑлтӑр. Вӑрӑм ӗмӗр, канлӗ ватлӑх сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, икӗ хӗрӗ, мӑнукӗ тата тӑванӗсем.**

Ноябрĕн 4-мĕшĕ – Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ

# Çĕр-шыв малашлăхĕ – халăх пĕрлĕхĕнче

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ! МУРКАШ РАЙОНĔН ÇЫННИСЕМ!**

**Сире пурне те çывхарса килекен Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн тата Килĕшӳпе çураçу кунĕсем ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

**Тĕрлĕ халăх çыннисем пĕр шухăшлă пулни, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни, пурте пĕр тĕллевлĕн ĕçлени мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ çинчен аса илтереççĕ пире çак уявсем.**

**Пĕрле чухне йывăрлăха çĕнтерме те, умри тĕллевсене пурнăçлама та çăмăлрах. Нумай та кирлĕ мар çакна валли, кашни çыннăн хăйĕн ĕç вырăнĕнче чун-чĕре хушнă пек вăй хумалла кăна, пĕр-пĕрне йывăрлăхра пулăшмалла. Вара çĕршывăмăр татах та вăйлăрах, тĕреклĕрех пулĕ. Пурнăçламалли вара паян чылай. Ку таранччен сахал мар ĕç турăмăр. Маллалахи ĕмĕтсем вара татах та пысăкрах. Ăнланулăх, пĕрлĕх, килĕшӳ пире яланах кирлĕ.**

**Хисеплĕ ентешĕмĕрсем! Малалла та пĕр-пĕрне хисеплесе, килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕр тĕллевлĕн ĕçлесчĕ, ăнланасчĕ, кашни утăма шухăшласа тăвасчĕ. Вара мĕн палăртни пурнăçланатех.**

**Пурсăра та çирĕп сывлăх, килĕшӳ, ăнлану, юрату, вăрăм та телейлĕ кун-çул сунатăп.**

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**




Паянхи уяв историйĕ çапла. Халăх пĕрлĕхĕн кунне ноябрĕн 4-мĕшĕнче уявлама кирлине Раççейри тĕнсен Канашĕ 2004 çулхи сентябрь уйăхĕнче чĕнсе каланă. Ăна Патшалăх Думин ĕçпе социаллă политика комитечĕ ырланă. 2004 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче Мускавпа Пĕтĕм Раççей патриархĕ Алексий уява ноябрĕн 4-мĕшĕнче палăртма кирлине официаллă каланă:

– Çак кун пире 1612 çулта Раççей халăхĕ, тĕрлĕ тĕне тытса пыракансем тата тĕрлĕ наци çыннисем пулнине пăхмасăр, пĕр-пĕринчен ютшăннине çĕнтерсе, хăрушă тăшмана парăнтарнине, çĕршыва гражданла тăнăçлă килĕшӳ патне илсе пынине аса илтерсе тăрĕ, – тенĕ Алексий патриарх.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче çак пуçарăва Думăри «Единая Россия» фракци ертӳçин çумĕ В. Богомолов ырланă.

2004 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Саратов хулинче РФ Президенчĕ В.В. Путин ирттерекен реформăсене ырлакан 8 пинлĕ митинг иртнĕ. Тухса калакансем В.В. Путина ноябрĕн 4-мĕшне Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ тесе уявлама кирлине палăртнă.

2004 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче Патшалăх Думине çĕнĕ саккун проектне тăратнă. Унпа килĕшӳллĕн ноябрĕн 7-мĕшне (Октябрьти революци кунĕ), декабрĕн 12-мĕшне (Конституци кунĕ) уявлассине пăрахăçлама, Çĕнĕ çул каникулĕсене 2 кунран 5 куна çитерме тата çĕнĕ уява ноябрĕн 4-мĕшĕнче уявлама палăртнă.

2004 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнче Патшалăх Думи асăннă проекта виççĕмĕш вулавпа йышăннă. Çапла вăл саккун пулса тăнă.

Раççей сумлă та хăватлă патшалăх. Кунта тĕрлĕ наци çыннисем, тĕрлĕ тĕне ĕненекенсем пурăнаççĕ. Çĕршер çул пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ.

Раççей патшалăхĕ, Раççей çыннисем тĕрлĕ йывăрлăха çĕнтерсе малалла аталанма яланах ăс-хакăл та, вăйхăват та çитернĕ. Çакна пирĕн пуян истори çирĕплетет.

Çĕр-шыв пуласлăхĕ – халăх пĕрлĕхĕнче. Эпир, вырăссем, чăвашсем, тутарсем, пушкăртсем тата ыттисем, пĕрле пулсан кирек епле йывăрлăха çĕнтерсе малалла утăпăр. Çапла пултăр.

Уяв ячĕпе саламлатпăр!

# Кăтартусем ыранхи кунпа пурăнтараççĕ

Интервью

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

Хăйсен професси уявне ял хуçалăх ĕçченĕсем кăçал япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Уйхир ĕçĕсенче эпир наука çитĕнĕвĕсемпе пĕлсе усă куракан, ял хуçалăх техникине тăтăш çĕнетсе агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, çĕр пахалăхне çулсерен хăпартса пыракан, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине куртăмăр. Ку вăл çапла пулмалла та.

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем кăçал 15371 гектар çинче тырă-пулă пăхса ӳстерчĕç. Кĕр çитсен 896 гектарне пĕр çул ӳсекен курăксем çине куçарса пустарса кĕртрĕç. Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсене кăçал бункер виçипе 36 пин тонна пухса кĕртрĕмĕр. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 25 центнер пулчĕ. Пĕрешкел условисенчех ăнăçлăрах ĕçлекенсем те пур. Акă Ильич яч. хис. хуçалăхра – 32,8 центнер, «Ударникра» - 31,7, Суворов яч. хис. хуçалăхра – 29,1 центнер.

«Иккĕмĕш çăкăр» Муркаш еншĕн яланах тухăçлă культура пулнă. Çакна шута илсе районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çĕр улмине 1289 гектар çинче пăхса ӳстерчĕç. Унăн вăтам тухăçĕ хальлĕхе 121 центнерпа танлашать. Çакă, паллах, сахалтарах. Ун çине çумăрлă кĕр кунĕсем витĕм кӳнине пытармалли çук.

**– Кăçалхи уй-хир ĕçсем историе юлчĕç темелле ĕнтĕ. Районти çĕр ĕçченĕсем малашлăха епле пăхаççĕ? Уяв умĕн çакăн пирки калани те вырăнлă пулмалла.**

– Хирĕçлеместĕп. Кирек епле ĕçре вăй хуракан та ыранхи кун пирки шутлать. Малашлăх планĕсем пулмасан паянхи ĕçĕн те пĕлтерĕшĕ çук. Çакна районти çĕр ĕçченĕ самантлăха та манăçа кăлармасть. Вăл хăйĕн кăçалхи ĕçĕсемпе çитес çулхи ӳсĕмĕсене тачă çыхăнтарса пырать. Сирĕн ыйтăвăр çине хуравласа çакна калатăп: çĕр ĕçченĕн тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхĕсем кĕрхи вырма ĕçĕсене пурнăçланă хушăрах çитес çул валли 4115 гектар кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç. Кунта мĕн палăртнине 100 процент е ытларах та пурнăçлакансене палăртса килет. Вĕсем: Суворов яч. хис. хуçалăх (460 гектар), А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ (350 гектар), А. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ (222 гектар), «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество (200 гектар).

Уй-хирти кĕрхи ĕçсен тепĕр пайĕ вăл – çĕртме сухалассси. Çумăрлă кĕр кунĕсене пăхмасăрах пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем паянхи куна 4200 гектар çинче кĕрхи çĕртме турĕç. Çак лаптăксем çитес çулхи пысăк тухăç çăл куçĕсем пуласси пирки паян манăн иккĕленӳ çук.

Тыр-пул уявĕ умĕн хуçалăхсем çĕр пулăхлăхне ӳстерессине епле ĕçленине те каласа хăварас килет. Кăçал районта 506 гектар çинче йӳçеклĕхе пĕтерме извеç çăнăхĕ сапрăмăр, 828 гектар çине кали тăварĕ хывăрмăр. Çĕр пулăхлăхне ӳстерессине 9 хуçалăх ĕçлерĕ. Вĕсен тăкакĕсене 80 процент республика бюджечĕ саплаштарчĕ. Эффективлăхĕ куç умĕнчех. Суворов яч. хис., «Ударник» хуçалăхсенче çуллелех 200-шер гектар ытла çĕр пулăхлăхне ӳстереççĕ. Кайран вара минераллă удобренипе ĕçлемесĕрех гектар пуçне 29-31 центнер тухăç илеççĕ. Çакă чылай çĕр ĕçченĕшĕн тĕслĕх пулмалла.

**– Уй-хир ĕçĕпе тачă çыхăннă отрасль вăл – выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси. Уй-хирте ӳсĕмсем пурри обществăлла выльăх патĕнче те курăнатех ĕнтĕ. Çапла мар-и?**

– Паянхи уява ял хуçалăх предприятийĕсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Муркаш тăрăхĕ выльăх ĕрчетессипе республикăра ыттисемшĕн яланах хăйне евĕр ориентир пулнă. Çакна упраса хăварса малашне те хамăр ята çӳлте тытасси – пирĕн пĕрлехи тĕллев. Кăçалхи тăхăр уйăхра районти тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем аш-какай пĕтĕмпе 3441,8 тонна туса илнĕ (иртнĕ çулхин 99,6 процентĕ). Çав шутра пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен кăтартăвĕ – 1263,8 тонна (112,1 процент). Çак таппхăрта çăмарта туса илесси 57,663 миллион штука çитнĕ (121,7 процент). Кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче район 32298,8 тонна сĕт суннă. Ку вăл иртнĕ çулхи шайрах. Тăхăр уйăх хушшинче «Передовик» хуçалăх сăвăма 134 процент ӳстернĕ. Мал утăмлисен шутĕнче Чкалов яч. хис. (108 процент), Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., «Свобода» (101 процент) хуçалăхсем. Ĕнесен продуктивлăхне ӳстерес тĕллевпе районта Чул хула облаçĕнчен килнĕ «Империал-НН» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн мобиллĕ цехĕ ĕçлеме пуçланине палăртмалла. Унăн пулăшăвĕпе «Свобода» тата «Герой» хуçалăхсем усă курма пуçларĕç те ĕнтĕ. Асăннă общество тĕрлĕ ӳсĕмри выльăхсем валли комбикорм хатĕрлесе парать.

**– Уй-хир ĕçченĕпе выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче вăй хуракансем хушшинчи çыхăну хĕл каçма мĕн чухлĕ выльăх апачĕ янтăланинчен аван курăнать. Хĕл кунĕсем кăçал выçă килмĕç-и?**

– Ял хуçалăхĕнче ĕçлекене тăтăш шухăшлаттаракан ыйтăва хускататăр эсир. Иртнĕ çу кунĕсемпе кĕрхи вырма ĕçĕсене пăхсан пирĕн кунта пăшăрханмаллиех çук. Хĕл тапхăрне обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли ял хуçалăх предприятийĕсем районĕпе 8505 тонна утă хатĕрленĕ. Янтăланă утăн 54 проценчĕ 1 класлă, 38 проценчĕ 2 класлă, 8 проценчĕ 3 класлă. Иртнĕ çу кунĕсенче районĕпе 14000 тонна сенаж (пĕтĕмпех 1-мĕш класа тивĕçет), 18283 тонна силос янтăланă. Пахалăх тĕрĕслевĕ силосăн 91 проценчĕ пĕррĕмĕш класлă, 9 проценчĕ иккĕмĕш класлă пулнине çирĕплетрĕç. Хĕл тапхăрĕнче пурте тăрăшса ĕçлесен выльăх-чĕрлĕхрен çителĕклĕ продукци илесси куç кĕрет. Тăрăшуллă ĕçлесен аталанăвăн малашлăх çулĕсем те тухăçлă пуласса шанатăп.

Вырмара палăрнă комбайнерсем, ĕçре ыră тĕслĕх пулса тăнă водительсем, уй-хир ĕçĕнчен пăрăнман механизаторсем, мал туртăмлă бригадирсемпе уй-хир ĕçченĕсем, обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракансем паян кашниех ыră сăмаха тивĕçлĕ. Вĕсене Тыр-пул уявĕнче тăрăшуллă ĕçшĕн тĕрлĕ парнесемпе пĕрлех районт, республика та, Раççей те хăйĕн ĕçченĕсем пирки манманнине кăтартĕ.

Çитес эрне кун пурне те район центрне Тыр-пул уявне чĕнетĕп.

Кану кунĕсем

# Уявсемччен инçе мар

Раççейре пурăнакансем ноябрь уйăхĕн малтанхи канмалли кунĕсенче икĕ кун мар, хăрăсах виçĕ кун канĕç. Ку вăл ноябрĕн 4-мĕшĕнче Халăх пĕрлĕхĕн кунне уявланипе çыхăннă.

Уяв эрне куна килет. Хыççăн – кану кунĕсем. Çапла вара виçĕ кун канăпăр.

Хыççăнхи вăрăм кану кунĕсем – çитес çул пуçламăшĕнче. Ун чухне декабрĕн 31-мĕшĕнчен тытăнса январĕн 9-мĕшĕнчен канăпăр. Январĕн 10-мĕшĕнче, ытлари кун, ĕçе тухмалла пулĕ.

Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн январĕн 1, 2, 3, 4 тата 5-мĕшĕсем уяв – Çĕнĕ çулхи каникул кунĕсем. Январĕн 7-мĕшĕ – Христос çуралнă кун.

Январĕн 1-мĕшĕ вырсарни куна, январĕн 7-мĕшĕ вара шăмат куна тивнĕ май эрне кун, январĕн 6-мĕшĕнче тата тунти кун, январĕн 9-мĕшĕнче, канмалла пулать.

2012 çулхи февраль уйăхĕнче хушма кану кунĕ февралĕн 23-мĕшĕнче кăна пулать. Кану кунĕсене куçарма тивмест, мĕншĕн тесен вăл кĕçнерни куна тивет.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне вара урăхларах уявлăпăр. Мартăн 8-мĕшĕ те кĕçнерни куна тивет. Анчах та правительство постановленийĕпе мартăн 11-мĕшĕнчи вырсарни куна мартăн 9-мĕшĕнчи эрне куна куçарнă. Çапла вара граждансем виçĕ кун пĕр харăс канĕç те хыççăн кайран ултă кун ĕçлĕç.

Тĕнчере

# 7 000 000 000-мĕш – Калининградран

Тунти кун, октябрĕн 31-мĕшĕнче, Çĕр çинчи çынсен йышĕ 7 миллиарда çитнĕ. Çав кун юбилейлă пепке Калининград хулинче çуралнă. Ку вăл – Петр Алексеевич Николаев. 50 сантиметр çӳллĕш, 3 килограмм та 60 грамм таять. Çапла пĕлтернĕ «Россия 24» телеканал.

ООН врачĕсемпе сăнавçисем ача хăш вăхăтра кун çути курнине тĕп-тĕрĕс палăртнă – 00 сехет те 02 минут. Амăшĕпе ача хăйсене аван туяççĕ.

Çав кунах телейлĕ ача амăшне регионти перинатальнăй центрта асăнмалăх «Рожден в день 7 миллиардов» сертификат панă.

Планета çинче 7 миллиардмĕш çын çуралнине Çĕр çинче пурăнакансен Пĕтĕм тĕнчери Доклачĕн презентацине халалланă.

# Республикăра 3-мĕш




*Шупашкарта «Вĕрентӳ ĕçченĕсен професси пултарулăхĕнчи информаципе коммуникаци технологийĕсем» темăпа конкурс иртнĕ. Унта «Путене» ача сачĕн пĕррĕмĕш категориллĕ воспитателĕ Ирина Геннадьевна Кожевникова та хутшăннă. Вăл унта ача садне çӳрекенсене И.Я. Яковлевпа, унăн пултарулăхĕпе тĕрĕс паллаштарасси пирки каласа панă. Конкурса хутшăннă 31 участник хушшинче Ирина Геннадьевна 3-мĕш вырăна тивĕçнĕ (сăн ӳкерчĕкре).*

Вулакан пултарулăхĕ

# Кĕр уявĕ

Кĕрхи туй çитет каллех,
Хатĕрленĕр хальтерех.
Пухăнччăр пур тус-тăван,
Чĕнме кăна эс ан ман!
Ĕçкĕ-çикĕ ирттерме
Йăла-йĕрке пĕлмелле.
Тутлă кукăль пĕçерме
Тырă пухса кĕртмелле.
Пухăннă саламлама:
Тантăшсем, тăван, кума.
– Кун-çул пытăр вăрăма,
Савăнăç кăна курма.
Хуллен саспа сĕнĕçсем
Ăнлантарĕç ваттисем.
Итлесемĕр çамрăксем,
Такăр пулччăр çулусем!
Калаçасчĕ кăмăллăх,
Пурăнасчĕ мăшăрпах,
Юратса-çке пĕрлешсе,
Пĕр-пĕрне килĕштерсе.

КЛАВАА.

# Вырмара палăрчĕç

Ĕç паттăрĕсем



**Район администрацийĕн пуçлăхĕн хушăвĕпе вырмара ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинче конкурс ирттернĕ комисси пĕтĕмлетĕвĕпе иртнĕ вырмара Суворов яч. хис. хуçалăхри Радонеж Виссарионович КУЗНЕЦОВ (сăн ӳкерчĕре) экипажĕ çĕнтернĕ. Вĕсем «АКРОС-530» комбайнпа 2001 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Экипаж 1-мĕш степеньлĕ диплома, «Вырма-2011» тапхăрти чи лайăх комбайн экипажĕ» лентăна тата 3000 тенкĕ укçан премие тивĕçнĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич НИКИТИН экипажĕ. «Вектор» комбайнпа ĕçлесе вĕсем вырма тапхăрĕнче 1980 тонна тырă çапса илме мехел çитернĕ. Экипажа 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 2500 тенкĕ преми пама йышăннă. Виççĕмĕш вырăна «Свобода» хуçалăхри Петр Апполонович ТОЛИКИН экипажĕ тухнă. Вĕсем «ДОН-1500» комбайнпа 1571 тонна тырă пуçтарса кĕртнĕ, 3-мĕш степеньлĕ диплома тата 2000 тенкĕ премие тивĕçнĕ.**

Хăрушсăрлăх

## «Тимлĕ пулăр – каникул»

Çул çинчи инкек никама та тиркеместь, кашнин умне сиксе тухма пултарать. Вĕсенче ачасем суранланни вара пушшех те пăшăрхантарать. Акă кăçал та М–7 трасса çинчи инкексенче ачасем суранланни пĕрре мар пулчĕ. Ытларахăшĕ – машинăсем çапăннă чухне. Апрельте Кашмаш ялĕ çывăхĕнче машина çуран çӳрекенсене çапса каять. Пĕр хĕр ачана медицина пулăшăвĕ памалла пулса тухать.

Ĕçри практика ачасем хутшăннипе пулса иртекен инкексен шучĕ кĕр кунĕсенче ытлараххине çирĕплетсе парать. Çак пулăм, паллах, çанталăкпа та çыхăннă. Анчах ачасем те каникул вăхăтĕнче хăйсене ирĕклĕрех туйса асăрханулăх пирки манса каяççĕ.

Октябрĕн 31-мĕшĕнче пуçланнă «Тимлĕ пулăр – каникул» профилактика мероприятийĕ шăпах ачасен çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă та. Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем çак тĕллевпе ноябрĕн 9-мĕшĕччен ачасемпе тĕл пулса ăнлантару калаçăвĕсем ирттереççĕ, çул-йĕр правилисене аса илтереççĕ. Аслисен те ачасене асăрханулăх пирки каласах тăрасчĕ.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**ГИБДД инспекторĕ.**

# Ачалăх пурин те пĕрре кăна

Патшалăх пулăшăвĕ

***Ачалăх кунĕсем кирек камшăн та чи хаваслă та илĕртӳллĕ, яланлăхах асра юлмалли вăхăт пулса тăраççĕ. Пурнăç çулĕпе малалла утнă май эпир яланах ачалăха чи ăшă туйăмсемпе аса илетпĕр.***

***Анчах та ачалăх çулĕсем пурин те пĕр пек килмеççĕ çав. Хăшĕсем тулли мар çемьесенче е ашшĕсĕр, е амăшĕсĕр çитĕнеççĕ. Хăр тăлăххисем те çук мар. Ăнăçсăр çемьесенчи ачасене те çăмăлах килмест. Ачаран инвалидсем те пур. Вĕсен те ачалăх çулĕсем йĕркеллĕ иртчĕр тесе патшалăх енчен мĕнле майсем туса параççĕ-ха паян? Çак ыйту çине хурав пама ыйтрăм эпĕ ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхне Нина Пантелеевна ПЕТРОВĂНА.***

– Çак вăхăта районĕпе ачаллă çемье 4613 шутланать. Вĕсенче пĕтĕмпе 7486 ача çитĕнет. Нумай ачаллă çемьесенче 1486, тулли мар çемьесенче 1260, ăнăçсăр çемьесенче 109 ача. Кунсăр пуçне 104 çемьере 110 инвалид ача.

Йывăр лару-тăрури çемьесене тимлĕхсĕр хăвармастпăр, вĕсене тĕрĕслесех тăратпăр. Кăçал пирĕн специалистсем 89 çемьери лару-тăрăва тишкернĕ. 113 çемьене тĕрлĕ енлĕ пулăшупа тивĕçтернĕ. 9 çемьене Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви урлă пулăшу панă. 20 çемье валли вара социаллă хӳтлĕх пайĕ ача-пăча тумтирĕсем уйăрса парса пулăшрĕ. 31 çемьене ачасен ыр кăмăллăх марафонĕ шучĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 54 пин тенкĕлĕх çи-пуç уйăрса парса пулăшнă. 70 ача хăйсен сывлăхне тĕрлĕ лагерьсенче çирĕплетме пултарчĕ.

Çĕр-шыври демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатас, ачасене кирлĕ пек воспитани парса ӳстерес тĕлĕшпе патшалăх енчен пăхса хунă пулăшу мелĕсем сахал мар. Акă ача çуралсанах амăшне 11 пин те 703 тенкĕ уйăрса параççĕ. Кунсăр пуçне вĕсемех ача пĕр çулталăк çурă тултариччен уйăхсерен çемьери пĕрремĕш ачашăн чи сахалли пособи 2194 тенкĕ, иккĕмĕш тата хыççăнхи ачасемшĕн 4 пин те 388 тенкĕ илсе тăраççĕ. Амăшĕн декрета тухиччĕнхи ĕç укçи шайне кура вара ку пособи 8 пин те 777 тенкĕ таран пулма пултарать.

Ачасене 18 çула çитиччен пособи тӳлесе тăрасси те йĕркеллĕ пулса пырать. Унăн виçи вара çемье членĕсем пуçне тивекен вăтам тупăшран, çемье мĕнле категорие кĕнинчен, çемьере миçе ача пулнинчен тата вĕсен ӳсĕм тапхăрĕнчен килет. Çавăн пекех 2 çултан тытăнса 3 çулччен ачасене кирлĕ пек тăрантарма, çие юлнă хĕрарăмсене тата ачисене кăкăр çитерекен амăшĕсене йĕркеллĕ апатланма та уйăхсерен компенсаци тӳлессине йĕркеленĕ.

Хăш чухне çие юлнă хĕрарăмсен мăшăрĕсем призывпа çар службинче пулма пултараççĕ. Кун пеккисем ача çураличчĕнех пĕр хут 18 пин те 533 тенкĕ пособие тивĕçеççĕ. Кайран ача çуралсан вара вĕсемех ытти пособисемпе компенсацисемсĕр пуçне мăшăрĕ çар службинче пулнă тапхăрта уйăхсерен кашни ачишĕн 7 пин те 942 тенкĕ илсе тăраççĕ.

Опекăри тата пăхса пурăнма илнĕ çемьесенчи ачасем те тимлĕхсĕр юлмаççĕ. Кун пек ачасене 2 çулталăка çитиччен уйăхсерен 5 пин те 193 тенкĕ, 2 çултан тытăнса 7 çула çитиччен 5 пин те 402 тенкĕ, 7 çултан тытăнса 18 çула çитиччен 5 пин те 932 тенкĕ тӳлесе тăратпăр.

Ачасене çемьене пăхма илнисене хăйсене те ĕç укçи тӳлесе тăратпăр. Кун пек ашшĕ-амăшĕнчен пĕрине 1 е 2 тăлăх ача пăхма илнĕ пулсан уйăхсерен 3 пин те 295 тенкĕ, 3 е ытларах ачашăн 4 пин те 680 тенкĕ, 6 е ытларах ачашăн ашшĕ-амăшне иккĕшне те 4 пин те 680-шар тенкĕ ĕç укçи паратпăр.

Паллă ĕнтĕ, ачасене шкул çулне çитменнисен учрежденийĕсене çӳретнĕшĕн те ашшĕ-амăшĕн укçа тӳлемелле. Куншăн та вĕрентӳ пайĕ урлă пулăшассине пăхнă. Пĕрремĕш ачашăн тӳлев виçин 20 процентне, иккĕмĕш ачашăн 50 процентне, виççĕмĕш ачашăн 70 процентне патшалăх саплаштарать.

Юлашкинчен çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Компенсацисемпе пособисене вăхăтран вăхăта индексацилеççĕ. Пурнăç «хакланнă» май вĕсен виçисем те ӳссе пыраççĕ. Пĕр сăмахпа кашни ачанах ачалăхĕ тивĕçлĕ шайра иртчĕр тесе патшалăх енчен тивĕçтерекен пулăшу мелĕсем курăмлă.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

# Тĕслĕх илмелли хамăр патăмăртах

Техникăна – хĕллехи управа



Хура кĕр кунĕсем тăраççĕ. Ыранхи кунпа пурăнакан çĕр ĕçченĕ хирти юлашки ĕçсене вĕçлессипе тăрăшать. Республикăран Муркаш тăрăхĕшĕн явапллă пулса тăракан ЧР хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçи В. Димитриев юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче ĕçлĕ çул çӳревпе районти хуçалăхсенче пулса курчĕ. Владимир Павлович чăн малтанах çулталăк вĕçленсе пынă май çитес çулхи ĕç-хĕл пирки те паянах шутлама кирлине палăртрĕ.

– Чăваш Республикин Президенчĕ М. Игнатьев ял хуçалăхне килекен çĕнĕлĕхсенчен çывăрса юлмасăр ĕçлеме чĕнсе калани аслă асаттесем кая юлсан каю шăтать, тесе асăрхаттарнипе тӳр килет. Пурнăç аталанăвне тивĕçлĕ шайра тытма, кунçул уттипе тан пыма эпир кашниех çĕнĕлĕхсем вырăнли пирки, вĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшмалли çинчен калаçатпăр. Калаçатпăр та... пирĕн сăмахсем чылай чух чул çине мар, юр çине çеç юлаççĕ. Мĕн çуккине тумалла, пуррине – упрамалла. Ĕçри çак чăнлăха кĕрхи ĕçсем вĕçленнĕ май хуçалăхсенче ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслеме тухсан яр уççăнах курма пулать, – терĕ вăл «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн тракторпа машина паркне çитсен. Кунта комисси членĕсем хуçалăхăн тĕп инженерĕпе В. Леонтьевпа тĕл пулса калаçрĕç. Шурчасем ытти çулсенчи пекех техника управĕ çине пысăк тимлĕх уйăрни пирки иккĕленӳ пулмарĕ. Хуçалăх хăйĕн хирĕсенче вырма ĕçĕсене вĕçленĕ, çĕр улми кăларса пĕтернĕ. Паян пĕр «хир карапĕ» кӳршĕллĕ хресчен (фермер) хуçалăхне вырма вĕçлеме пулăшать. Парка таврăнакан техникăна управа лартассипе кунта ĕçсем пуçланнă кăна-ха.

– Техникăна хĕллехи управа лартассипе ĕç условийĕсем паллă. Ангарсене ытлашши хатĕрхĕтĕртен тасатнă. Техникăна çумалли вырăн хатĕр, – паллаштарчĕ Валерий Анатольевич.

«Герой» хуçалăхран тухсан тĕрĕслев комиссийĕ Анаткас Турайнелле çул тытрĕ. Унта вырнаçнă Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ – ял хуçалăхĕнчи çĕнĕлĕхсемпе тачă çыхăнура пыраканскер.

Анаткассисем ятарлă юсав бригадисем йĕркелесе техникăна управа лартассипе, мехпарка хĕл кунĕсене хатĕрлессипе юлашки кунччченех тимлени хуçалăха çитсенех курăнчĕ. Уй-хир бригадин ĕçченĕсем мехпарк территорийĕнче субботник ирттеретчĕç. Арçынсен ушкăнĕ – ытларах механизаторсемпе паркри ĕçченсем – мехпарк таврашĕнчи чалăштĕлĕш, хăтсăр тата хăрăкмарăк йывăçсене касса тавралăха илем кĕртессипе тимлетчĕç. Кĕрхи уй-хир ĕçĕнче пулнă техникăна «Ял хуçалăхĕнче усă курмалли техника. Управ правилисем» ГОСТа пăхăнса управа лартнăччĕ ĕнтĕ. Хуçалăх ертӳçи В.С. Андреев та, тĕп инженер Г.А. Викторов та паркра ĕçлекенсемпе пĕрлеччĕ.

– Куллен çĕнĕ техника туянма çĕр ĕçченĕн вăй çитсех каймасть. Çавăнпа та хамăрăн мĕн пуррине тĕплĕнрех упрама тăрăшатпăр. Пĕр гайка татăлса кайнипех, урапа кукăр-макăр кусма пуçланипех техникăна списокран кăларасси пирĕн ĕç мар. Ăна вăхăтра юсасан тата типтерлĕ упрасан унăн ĕмĕрне самай тăсма май килнине, çак çулпа пырсан кашниех хуçалăх экономикине тĕкĕ панине кооперативра ĕçлекенсем пурте ăнланаççĕ. Çак ăнлава тĕпе хурса малашлăх планĕсем çуралаççĕ, – терĕ тирпейлĕ мехпарк хĕрринче вырнаçнă «Акрос-530» комбайнпа сеялкăсем, çĕр хатĕрлемелли техника хатĕрĕсем патĕнчен иртнĕ май кооператив председателĕ. – Ĕçсене тĕппипех вĕçленĕ теместпĕр пулсан та çак техникăпа ĕçленĕ механизаторсем вĕсем çине алă сулманни пуçăннă ĕçе вĕçне çитерме шантарать.

Çакă мар-и-ха вăл çитес çур акине хатĕрленнин пĕрремĕш утăмĕ. Кайран пĕр условисенчех пĕрисем ытларах тухăç илме пултарнинчен тĕлĕнетпĕр те теприсем пирки алăсене сарса хул пуççисем сиктеретпĕр...

Такамшăн ĕçлеместпĕр-çке. Çур акирен пуçласа çĕр пичĕ шурă юрпа витĕниччченех хуçалăх экономикине аталантарассишĕн ĕçлекен техника çине епле алă сулăн-ха. Хĕл каççан каллех çав техникăна хире кăлармаллаçке.

**А. БЕЛОВ.**

Инкек хыççăн

## Чĕререн тав тăватпăр

Хуйхă-суйхăна пĕччен чăтса ирттерме йывăррине эпир те хамăр пурнăçра тĕл пултăмăр. Юпа уйăхĕн 20-мĕшĕнче Муркаш салинчи пирĕн хушма хуçалăхра пушар тухрĕ. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕ вырăна вăхăтра çитнĕрен тата пушарнăйсем çине тăрса ĕçленĕрен хушма хуçалăхăн ытларах пайне çăлса хăварма май килчĕ. Апла пулин те пурăнмалли кил-çурта хăтарса хăварма пулмарĕ. Хăвăрт вăй илнĕ çулăм пус çумне пус хушса тунă нумай пурлăха кĕл турĕ. Умра вара хĕл сиввисем. Çак йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайлакансем нумай пулчĕç. Тавах çакăншăн пурне те. Вăлах пире йывăрлăхсем умĕнче çухалса каймасăр малалла пăхма тĕкĕ пулса тăчĕ. Çапла вара эпир паян хамăра инкекре пĕччен хăварманшăн тăвансене, пускилсене, юлташсене, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх ертӳçине В. Семенова тата çак хуçалăхра ĕçлекенсене, С. Тимофеев ертсе пыракан Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятине, кунта ĕçлекен С. Матвеев экскаваторщика, Кашмашри П. Толикин механизатора, Муркаш райповĕпе Чăвашпотребсоюз системинче вăй хуракансене, Муркашри тĕп больница ĕçченĕсене, Муркаш ял тăрăхне тата унăн пуçлăхне Н.И. Никитина, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн коллективне чĕререн тав тăватпăр. Сирĕн пурнăçăр ăнса пытăр. Инкек тӳсекене пулăшнăшăн сире Турри хевте патăр! Сывлăхăр çирĕп пултăр та ĕмĕрĕр вăрăм килтĕр!

**Куликовсен çемйи.**

Спортри ăнăçу

## Малти вырăнсем – Атапайсен



Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан пикесем – Атапайри тĕп шкулта вĕренекен Снежанна Музыкова, Диана Кулькова тата Лия Блинова. Октябрĕн 20-мĕшĕнче вĕсем велоспорт енĕпе Раççей кубокĕн 9-мĕш тапхăрĕнче ăмăртрĕç. Пирĕн маттур вĕренекенсем кĕçĕннисен ӳсĕмĕнче лайăхпа палăрма пултарчĕç.

Мускав, Ижевск тата ытти нумай хула спортсменĕсене вĕсем хăйсенчен ирттермен: И. Воробьев тренер патĕнче ăсталăха туптакан, Снежанна – 1-мĕш, Диана – 2-мĕш, Лия 3-мĕш вырăна тухнă. Иван Васильевич Воробьевăн тепĕр воспитанникĕ – Анастасия Смелова – вăтам ушкăнри велосипедистсен чупăвĕнче виççĕмĕш вырăна тивĕçнĕ.

**А. ИВАНОВА.**

## Полици хроникинчен

# Тар тăкса «ĕçленĕ», укçаллă пулас тенĕ...

«Кун пек пăрахăçа тухнă çуртсем чылай, никама та кирлĕ мар. Пĕтес пулсан тĕппи-йĕрĕпех пĕттĕр», – тенĕ пулас Очăкассинче пурăнакан арçын Турхан ялĕ çывăхĕнчи «ĕлĕк» сысна ферми пулнă çурт пирки. Çынсем курманнине курма пултарнăскер фермăри тислĕк кăлармалли 60 метр тăршшĕ сăнчăра, 6 электричество двигательне кăнтăр кунĕнчех хăйĕн машини çине тиенĕ. Ку çеç те мар-ха. Тимĕр хулăсенчен тунă 30 алăк (тăршшĕпе сарлакăшĕ 1-шер метр), 10 штук хатĕр металл решеткесем те машина çинех тиеннĕ. «Йывăр» ĕç тума мĕн чул вăй тăкакланнă! Мĕнлерех ывăннă пуль арçын?

Халĕ «ывăнса çитнĕ» арçын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Явапĕ каллĕ-маллĕ тимĕр алăк йăтнинчен çăмăлрах пулать-ши ĕнтĕ? «Кукăр алăна» ирĕкре тӳрлетмесен те пултараççĕ.

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш район уйрăмĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Спорт

# Ноябрĕн 4-мĕшĕнче – висĕ ăмăрту

Тыр-пул уявĕ ячĕпе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен тата ял тăрăхĕсен командисен **мини-футбол ăмăртăвĕ** иртет. Вăййăсем Спорт çурчĕ умĕнче 10 сехетре пуçланаççĕ. Командăра 10 вылякан пулмалла.

**Кире пуканĕ çĕклессипе** иртекен ăмăрту ĕçлекенсен спартакиади шучĕпе пулать. Вăл Спорт çуртĕнче 10 сехетре пуçланать. Çĕнтерӳçĕсене уйрăммăн тата командăпа палăртаççĕ. Категори виçисем: 65, 70, 75, 80 килограмччен тата 80 килограмран ытларах.

**Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн** те спорт ăмăртăвĕ иртет. Унта хутшăнма район территорийĕнче вырнаçнă предприятисемпе организацисен, учрежденисен командисене йыхравлаççĕ.

Ăмăрту «Сывлăх» ФСК-ра 10 сехетре пуçланать. Вăл спортăн çак енĕсемпе иртет: çăмăл атлетика эстафети (2 арçын, 2 хĕрарăм), волейбол (командăра – 6 çын, вăййăсем висĕ партипе иртеççĕ,15 очко пухиччен), вăй гимнастики (1 арçын, 1 хĕрарăм), шывра ишессипе хутăш эстафета (2 арçын – 50-шар метр, 2 хĕрарăм – 25-шер метр), вĕрен туртасси (3 арçын, 2 хĕрарăм).

**Хамăр инф**.

# «Вилĕме ăçта сутнине пĕлтер»

## Акци

Наркотикăн саккунсăр çаврăнăшне хирĕç кĕрешме пакунлисене эпир те пулăшма пултаратпăр. Çак тĕллевпе ноябрĕн 10–18-мĕшĕсенче пĕтĕм Раççейре «Вилĕме ăçта сутнине пĕлтер» ятпа ятарлă акци иртет.

23-01-00 Шупашкар хулин номерĕпе «шанчăклăх телефонĕ» çине шăнкăравласа наркотик хатĕрлени пирки, ăна йышăнакансем пирки пĕлтерме пултаратăр. Ку номерпе шăнкăравласан наркотик йышăнакан çынна сиплесси тата ун хыççăнхи реабилитаци пирки консультаци те параççĕ. **Хамăр инф.**

## Сывлăх

# Тĕрĕсленме ан ӳркенĕр



Юлашки çулсенче хăрушă шыçă (злокачественная опухоль) чирĕсем уйрăмах анлă сарăлни палăрать. Вăл шутра – апата ирĕлтерекен тытăмăн (желудочно-кишечный тракт) ракĕ те. Ăна аталанма пуçланă хыççăнах сиплеме майсем пур, кая юлсан вара чире пĕтермелли мелсем çук. Çавăнпа та шыçă чирĕсене малтанхи тапхăрта, вĕсем ытти органсем çине куçса кайиччен, асăрхани питĕ пĕлтерĕшлĕ. Шыçă аталанма пуçланине эндоскопи тĕрĕслевĕпе пĕлме пулать. Пĕлме кăна мар, ăна пĕтерме те. Е тата эндоскоп аппарачĕпе рак чирне куçма пултаракан ытти чирсене тупса палăртса вĕсене вăхăтра сиплеме пулать. Çакăн пек чирсен шутне, сăмахран, хырăмлăхри язвăсем, полипсем тата ыттисем те кĕреççĕ.

Апата ирĕлтерекен тытăмăн рак чирне асăрхаттарас тĕллевпе 2010 çулта Муркашри тĕп больница хальхи вăхăта тивĕçтерекен эндоскопи аппарачĕсем туянчĕ. Çав çулах больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов республикăри онкодиспансерăн эндоскопи уйрăмĕн ертӳçине Д.Н. Трофимов доцента, медицина наукисен кандидатне **(сăн ӳкерчĕкре сулахайра эндоскопи пӳлĕмĕн ĕçченĕсемпе)** Муркаша ĕçлеме чĕнчĕ. Вăл халĕ шăмат кунсерен Муркашри тĕп больницăра ракпа чирлеме пултаракансен ушкăнне кĕрекен пациентсене тĕрĕслет, тӳлевсĕр консультацисем ирттерет, методика пулăшăвĕпе те тивĕçтерет. Ракпа чирлеме пултаракансен ушкăнне кĕнине ятарлă ыйтăм мелĕпе пĕлеççĕ. Ку ĕçе участок фельдшерĕсемпе врачĕсем те ирттереççĕ. Çавăн пекех больницăра çĕнĕ мелпе те ĕçлетпĕр: рак чирĕн паллисем пуррипе çуккине юн илсе тĕрĕслессипе. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕ рак чирне майлă пулсан пациентăн эндоскопи тĕрĕслевне ирттермелле.

Çапла ĕçленин лайăх енĕ палăрăмлă та. Апата ирĕлтерекен тытăмра хăрушă шыçă чирĕсем аталанма пуçланине чылай пациентăнне тупса палăртма май пулчĕ. Рак чирне пуçарма пултаракан чирсене те эндоскопи тĕрĕслевĕпех палăртрăмăр. Нумайăшĕ тĕрлĕ шыçăсене çийĕнчех онкодиспансерта сиплеnĕ (вĕсене пĕтернĕ). Халĕ çак пациентсем лăпкă пурăнма пултараççĕ, паллах, вăхăтран вăхăта эндоскопист патĕнче тата участокри терапевт патĕнче тĕрĕсленсе тăрсан. Икĕ пациентăн 2-мĕш тата 3-мĕш тапхăр аталанăвне кĕнĕ хăрушă шыçăсене хирурги мелĕпе пĕтернĕ. Вĕсем онкодиспансерта учетра тăраççĕ. Хальхи вăхăтра çак пациентсен хăрушă шыçă малалла аталанмасть. Шел пулин те, пĕр çынна çăлса хăварма май пулмарĕ. Эндоскоп аппарачĕпе ирттернĕ тĕрĕслев унăн рак чирĕ чылай малтан пуçланса организм тăрăх сарăлнине палăртрĕ. Çавăнпа та чирлĕ çынна сыватма нимĕнле май килмерĕ. Рака куçма пултаракан чирсем пур çынсене терапи сиплевĕ ирттерме хушнă.

Муркаш больницинчи эндоскопи служби хăрушă шыçăсене асăрхаттарассипе районта пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Анчах та çынсен хăйсен те врач патне кайма нихăçан та тăхтаса тăмалла мар.

**С. ОВЧИННИКОВ,**
**Муркашри тĕп больницăри эндоскопист врач.**


В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30. З/п от 25000 руб. (сдельная). 4-5.
Тел.: 8(8352)23-22-22.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-5.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 40-50.**

**Январĕнче иккĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă ĕне сутатпăр.**
**Тел.: 8-927-85-47-005.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-12.**





## Прогноз погоды

| | среда 2 ноября | | | | четверг 3 ноября | | | | пятница 4 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +3 | +3 | +4 | +3 | +2 | +5 | +6 | +5 | +4 | +1 | 0 | -2 |
| Давление мм | 747 | 749 | 749 | 748 | 747 | 745 | 743 | 740 | 741 | 745 | 747 | 748 |
| Влажность % | 91 | 95 | 83 | 82 | 90 | 96 | 91 | 86 | 87 | 63 | 53 | 56 |
| Ветер м/сек | С 5 | С 5 | З 3 | З 4 | З 5 | З 5 | З 6 | З 6 | С-З 7 | С 8 | С 6 | С 6 |
| Солнце восход/заход | | 08:01 | 17:11 | | | 08:03 | 17:09 | | | 08:05 | 17:07 | |
| Луна восход/заход | | 14:17 | 23:34 | | | 14:33 | 00:51 | | | 14:47 | 02:04 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ЙЫХРАВ**

**Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Орининти вăтам шкул хăйĕн 150 çулне паллă тăвать. Çак шкулта тĕрлĕ çулсенче вĕреннĕ, ĕçленĕ çынсене пурне те 10 сехете уяв тĕл пулăвне чĕнетпĕр. Йĕркелӳ ушкăнĕ.**





**В Москву требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание – бесплатно. З/п 30000 руб.**
**Тел.: 8(8352)36-42-92, 36-42-94. 3-5.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.**
**Тел.: 8-927-668-70-15. 10-13.**

DVD фильмы
CD, MP3 музыка
Игры, аудиокниги
вся продукция лицензирована
ПРОДАЖА, ПРОКАТ
доставка на дом
Мы находимся на рынке
с. Моргауши торговая точка
«КАНЦТОВАРЫ»
Контакты: тел: 62-022(местн.)
8(927)66-55-900
E-mail: Slawa.022@bk.ru
Мы ждем вас!

**Кафе «Юман» принимает заказы на проведение юбилейных торжеств, дня рождения и т. д. по адресу: д. Тренькино, ул. Новая, д. 15. Тел.: 66-757, 8-903-346-74-23.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира по адресу: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 19, кв. 5. Цена договорная.**
**Тел.: 8-919-673-90-87, 8-919-673-90-89. 2-2.**

* * *

**Продаем капусту на хранение и на квашение (Голландские сорта), кочерыжки маленькие, а также картофель (оптом). Тел.: 8-960-311-23-87.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира общей площадью 33,4 кв. м. со всеми удобствами, новой мебелью, после ремонта. Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Восточная, д. 6, кв. 6. Тел.: 8-906-135-37-15, 8-906-132-05-30.**

* * *

**Куплю предметы старины: ама, хушпу серебряные от 20 000 до 100 000 рублей. Деньги сразу. Возможен залог под 0,4 процента в день. Тел.: 8-937-375-88-55. 2-10.**

* * *

**Открылся новый автосервис в с. Моргауши (мехпарк СХПК им. Е. Андреева). Требуются: автослесари, автоэлектрик, автомойщики (муж. и жен.). Подробности по тел.: 8-927-84-74-508, 8-927-84-44-661. 2-2.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 2-10.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 1-12.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец.**
**Тел.: 8-905-342-39-43. 5-13.**


* * *

**Администрация Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении общего собрания долевиков СХПК «Дружба», которое состоится 12 декабря 2011 года в 13 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ярабайкасы, в здании Ярабайкасинского сельского Дома культуры.**

**В повестку дня включены вопросы:**

**1. Об утверждении проекта межевания земельных участков, выделяемых в счет земельной доли.**

**2. Рассмотрение и утверждение списка невостребованных земельных долей.**

**3. Выборы уполномоченного лица, выступающего от имени участников долевой собственности без доверенности.**

**4. Разное.**

**Для ознакомления по всем интересующим вопросам обращаться в администрацию Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ярабайкасы, ул. Парковая, д. 1 с 8-00 до 17-00 кроме субботы и воскресенья. Текст объявления размещен на информационных стендах и на сайте Ярабайкасинского сельского поселения.**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование начальнику отдела имущественных и земельных отношений Петрову А.В., главному специалисту-эксперту отдела организационно-кадрового, правового обеспечения и по работе с органами местного самоуправления Петровой М.В. в связи с кончиной отца и свекра

**ПЕТРОВА**
**Валерия Николаевича.**

ООО «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района выражает глубокое соболезнование начальнику отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района Петрову А.В. в связи с тяжелой утратой – смертью отца

**ПЕТРОВА**
**Валерия Николаевича.**

Коллектив ООО «Аршин» выражает глубокое соболезнование родным и близким Петрова А.В. по поводу кончины отца

**ПЕТРОВА**
**Валерия Николаевича.**

«Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕн правленийĕ район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕн А.В. Петровăн ашшĕ

**Валерий Николаевич**
**ПЕТРОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

**Хаçатăн çитес номерĕ чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче тухать.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 01.11.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4362.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.